28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРĔН 16 ВЫРСАРНИКУН 180(6931) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Вăрлăхлăх курăксене вăхăтра пухса кĕртер

Пирĕн колхозсем ăнса пулнă тырпула пухса кĕртес енĕпе ĕçленĕ вăхăтрах килес çулхи тухăçлă тырпулшăн та, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтăва ăнăçлă татса парассишĕн те пикенсе ĕçлеме тивĕçлĕ. Уйрăм колхозсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас енĕпе пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ вăхăтрах, хăшпĕр ĕçсене иккĕмĕш вырăна хăварма пăхаççĕ. Çакăн пек ĕçсен шутне вăрлăхлăх курăксене вырса пухассине, уйрăмăнах вĕсене çапса шĕкĕлчессине кĕртеççĕ. Çакăн пек шутлакан колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине тăвасси курăк акса туничен нумай килнине асра тытмаççĕ.

Курăк акни кăна пусуçаврăнăшне йĕркелеме, тăпрана тĕрлĕ имçампа пуянлатма, колхозри выльăх-чĕрлĕх апачĕн базине çирĕплетме май парать. Иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, кăçал пирĕн колхозсенче вăрлăхлăх курăксем лайăх çитĕнчĕç. Вĕсен пĕтĕм лаптăкĕ те кăçал иртнĕ çулхи лаптăксенчен пысăкрах. Анчах уйра вăрлăхлăх курăксене çитĕнтерни—çур ĕç кăна-ха. Халĕ лайăх çитĕннĕ вăрлăхлăх курăксене вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртесси тата çапса шĕкĕлчесси калама çук пысăк вырăн йышăнать. Ялхуçалăх специалисчĕсем шутласа пăхнă тăрăх, кая юлса тата тирпейсĕр пухсан, клевер вăрлăхĕ çапма тытăниччененех 40—50 процент е ытларах та тăкаланса юлать. Советски районри «Сеятель» колхоз (председателĕ Андреев юлташ) иртнĕ çул вăрлăх участокĕнчи клевера вăхăтра пухса, çийĕпчех çапнă тата шĕкĕлченĕ. Çавна пула кашни гектартан вăтам шутпа 4,6 центнер вăрлăх туса илнĕ. Комсомольски районри «Культура» колхозра (председателĕ Любимов юлташ) вăрлăхлăх клевера вăхăтра пухман, çийĕнчех çапман тата шĕкĕлчемен. Нумай вăхăт хушши çумăр айĕнче вырттарнă. «Культура» колхозăн клевер «Сеятель» колхозăнни пекех вăйлă пулнă пулсан та, кунта кашни гектартан 10-шар килограмм кăна пухса илнĕ. Комсомольски районри «Пролетарий» колхозра иртнĕ çул 15 гектар клевера юр айне хăварнă, кăçал çуркунне вара ăна тракторпа сухаласа пăрахнă. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчи хăшпĕр колхозсенче те пулнă. Çавăнпа та кăçал çуркунне чылай колхозсем пусуçаврăнăшĕ тăрăх курăк акса хăвараймарĕç. Комсомольски районри колхозсенче пурĕ те 384 гектар кăна вăрлăхлăх клевер шутланать. Вăл шутран та чылай колхозсенче клевера çумкурăкĕсемпе ытти курăксем пусса илнĕ. «Красный клевер» колхозра 6 гектар вăрлăхлăх клевертан çурри ытла çум айĕнче пĕтнĕ. Вăрлăхлăх çитĕнтернĕ клевера пухасси çак районра кăçал та çителĕксĕр пырать-ха. Кунта пурĕ те 13 процента яхăн кăна вырса пухнă. Районра пĕр колхоз та клевер вăрлăхне çапса шĕкĕлчеме тытăнман.

Вăрлăхлăх курăксене пухма Чкаловски, Первомайски, Пăрачкав, Кувакино районĕсем пачах та тытăнман. Чурачăк, Вăрмар, Тăвай, Шăхасан, Муркаш, Канаш, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Улатăр районĕсенчи колхозсем те 3—10 процента яхăн кăна вырса пухнă. Асăннă районсенче клевера е ытти курăксене типĕтсе çапма е шĕкĕлчеме тытăннă пĕр колхоз та çук. Çак районсенчи парти, совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсенчен кирлĕ пек вывод туман.

Вăрлăхлăх курăксене вырса пуçтарас ĕçе ытти ĕçсемпе пĕрлех туса пымалла. Чылай районсем çапла тăваççĕ те. Сăмахран, Октябрьски район 95 процент, Шăмăршă районĕ 50 процент ытла пухса кĕртнĕ. Советски, Етĕрне, Çĕрпӳ, Елчĕк, Шупашкар, Куславкка тата ытти хăшпĕр районсенче те вăрлăхлăх курăксене пухса кĕртесси ăнăçлă пырать. Советски районри «Сеятель» колхоз вăрлăхлăх хăварнă 6 гектар клевера çурлапа вырса пухнă. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозра тимофеевкăна суйласа выраççĕ. Тимофеевка кунта лайăх çитĕннĕ, кашни гектартан 4 центнера яхăн вăрлăх илме шутлаççĕ, паян-ыран çапса та пĕтереççĕ.

Вăрлăхлăх курăксене алăпа е машинăпа вырса тата çавапа çулса пухнă хыççăнах типĕтсе, çийĕнчех çапса шĕкĕлчемелле. Йĕпреç районĕнчи колхозсенче иртнĕ çулсенче вырса пухнă çапман клевер капанĕсем халĕ те чылай-ха. Çакăн пек тĕслĕхсем колхоз руководителĕшĕн кăна мар, ялхуçалăх специалисчĕсемпе район руководителĕсемшĕн те тивĕçсĕр япала пулса тăраççĕ.

Курăксене пур тĕрлĕ машинăсемпе те вырмалла. Комбайнсемпе вырса пухни уйрăмах паха. Халĕ, тĕштырăсене вырса пĕтерсе пынă май, комбайнсемпе курăк вырса пухнă çĕрте анлăрах усă курмалла. Колхоз клевера хăйĕн машинипе вырса пухнă пулсан, МТС вăл колхоза клевера çапса шĕкĕлчеме пулăшмалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире çĕрĕç, совет тата парти организацийĕсене нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхлăх акнă участокĕсене вăхăтра пухса кĕни, нумай çул ӳсекен курăксен пĕтĕм вăрлăхне пухса кĕрсе сыхласа усрани курăк акса тăвас ĕçе аталантарас тата тĕрĕс пусуçаврăнăшне тытса пырас тĕлĕшпе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине асăрхаттарчĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрлăхлăх курăк участокĕсене вырса пуçтарма пуçланă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр пухса кĕртме, вырма тытăннă хыççăн 20 кунран кая юлмасăр çапса е шĕкĕлчесе пĕтерме хушаççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем тата çĕрĕç органĕсем вăрлăхлăх курăксене пухса кĕртес тата çапса шĕкĕлчес ĕç мĕнле пынине яланах контроллесе тăмалла. Вăрлăхлăх курăксене пĕр тăкаксăр, кĕске вăхăтра пухса кĕртес ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтармалла, вĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса пымалла.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе çак кунсенчех вĕçлер!

Вăрнар тата Советски районсем пек ĕçлер!

Малта пыракансен кайрисене пулăшмалла

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Район тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пырать. Анчах та районра лайăх ĕçлекен колхозсем те сахал мар. «Авангард», «Большевик», «Красноармеец», «Путь социализма» тата ытти колхозсем пурĕ 23 колхоз вунăкунлăхра тĕштырăсене вырса пĕтерчĕç.

«Большевик» колхоз (председателĕ Гаврилов юлташ) пуринчен малтан тĕштырăсене вырса пĕтерчĕ. Кунта пур ĕçе те план тăрăх тăваççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçре ватти-вĕтти, колхоз правленинче ĕçлекенсем те хутшăнса кăнтăрла та çĕрле те ĕçлеççĕ. Çавна пула çак колхоз кĕрхи тырăсене вырассине планпа пăхнинчен 1 кун маларах, çуртырисене 2 кун маларах вырса пĕтерчĕ.

«Совет» колхоз (председателĕ С. Волков юлташ) тĕштырăсене вырса капапа хывса пĕтернĕ. Государствăна тырă парса татнă.

«Авангард» колхоз (председателĕ Пузырев юлташ) тĕштырăсене планпа пăхнинчен 3 кун маларах вырса пĕтернĕ. Кунта кашни ĕçе уйрăм сдельщинăпа тăваççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕнпур колхозниксем хутшăнаççĕ. Государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне тултараççĕ.

«Искра» колхоз (председателĕ М. Федоров юлташ) тĕштырăсене вырса пухмалли плана 1 кун малтан пурнăçланă. Государствăна тырă памалли графика иртерсе тултарать.

Буденный ячĕпе тăракан колхозра И. Сопляков юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет. Çак бригада членĕсем кашниех хăйсен кулленхи нормине 150—200 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Нăрваш Шăхаленчи «Осоавиахим» колхозра та пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем пур. Çак колхозри 1-мĕш бригада членĕсем Е. Краснова, Н. Яковлева юлташсем кĕрепленлĕ çавапа кунне 0,30—0,40 гектар çулаççĕ. Хăйсем çулнă тырра хăйсемех çыхаççĕ тата типĕтсе сурата хываççĕ. Колхозра майракаллă шултăра выльăхсемпе те усă кураççĕ. О. Васильева тата М. Кузьмина юлташсем хăйсен вăкăрĕсемпе 4—5 сухрăмран кунне 5—6 лав кĕлте турттарса нормăна 150 процент тултараççĕ.

Анчах та районра тырă вырса пĕтернĕ колхозсем юлса пыраканнисене пулăшас ĕçе çителĕклĕ организацилемен-ха. Лайăх ĕçлекен колхозниксен ĕçри опытне ытти колхозсенче те сармалла, кашни колхозăн Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса тĕштырăсене вырса пĕтерессишĕн тата государствăна тырă парса татассишĕн тимлĕн кĕрешмелле.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн районри колхозсем вунăкунлăхра тĕштырăсене вырса пĕтерчĕç. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем тырпул пухса кĕртессишĕн ывăнма пĕлмесĕр, кăнтăрла та çĕрле те, мĕнпур вăя хурса ĕçлерĕç.

«Труд» колхоз тырпул пухса кĕртес енĕпе малтанах тĕплĕн шухăшласа ĕç планĕ тунă. Çурлапа, çавапа, машинăпа камсем ĕçлемеллине, хăш участокра куллен мĕн чухлĕ ĕç тумаллине кăтартнă. Тырпул пухса кĕртме хутшăннă çынсем пурте уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ. Тырă вырма тухнă кунрапах 2 жнейкăпа пĕр чарăнмасăр вырнă. Андрей Ивановна Иван Матвеев машинистсем кулленхи нормăна 130 процентран кая тултарман. Çак колхоз паянхи куна кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ, кĕрхи çĕртме тумалли плана 50 процент ытла пурнăçланă. Халĕ кунта пикенсех авăн çапаççĕ, государствăна тырă параççĕ.

«Комбайн» колхоз тĕштырăсене планпа пăхнинчен 3 кун малтан вырса пĕтерчĕ. Кĕлтесене сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне йăлтах капана хывнă. Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем массăллă агитацилле ĕçе лайăх организациленĕ. Кашни кунах агитаторсем колхозниксене çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ тата хаçатсем вуласа параççĕ. Кунта тырă вырма тухнăранпа 17 номер боевой листок тата 5 стена хаçачĕ кăларнă. Лайăх ĕçлекен колхозниксене Хисеп хăми çине кĕртеççĕ.

«Красный партизан» колхозра машинистсем тата çавапа çулакансем 2-шер норма тултарса пынă, çавна май тĕштырăсене кунта планпа пăхнинчен виçĕ кун малтан вырса пĕтернĕ. Халĕ авăн çапас ĕç хĕрӳллĕ пырать. Итем çинче ĕçлекен А. Егорова, А. Миронова, В. Лескова тата М. Петрова юлташсем хăйсен нормисене нумай иртерсе тултараççĕ.

Кашни колхозрах бригадăпа бригада, звенопа звено ăмăртса ĕçленĕ. Кам мĕнле ĕçленине бригадăри е звенори канашлусенче сӳтсе-явнă. Лайăх ĕçлекенсене боевой листоксем, стена хаçачĕсем çине, хисеп хăми е кăтарту хăми çине çырса тăнă. Коммунистсемпе комсомолецсем ĕçре чи паха тĕслĕх кăтартакансем пулнă. «Ыраш» колхозра А. Ивановпа А. Андреев комсомолецсем жнейкăпа кулленхи нормăна яланах иртерсе тултарнă. Вĕсем хăйсемех кĕлте çыхакансем хушшинче агитаторсем пулса ĕçленĕ. Вĕсем ĕçлекен звеносенче нормăпа тултарайман пĕр çын та пулман. Тырă вырнă чухне кунта шурăмпуçпе ĕçлеме тытăннă, çĕм тĕттĕм пулсан тин ĕçрен кĕнĕ. Ĕçĕн пахалăхĕ пур çĕрте те тепĕ пекех лайăх пулнă. Тăккаланчăксене çийĕнчех пухса пынă.

Районри колхозсем тĕштырăсене вырса пĕтерчĕç. Халĕ кашни колхозрах кĕлтесене капана хывса пĕтерес, кунĕн-çĕрĕн авăн çапас тата çак уйăхран кая юлмасăр государствăна тырă парса татас задача тăрать. Çак ответлă задачăна пурнăçлассишĕн кашни колхозрах çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлемелле.

Н. ПУШКИН.

Заготзерно пунктĕнче тивĕçлĕ йĕрке тумалла

СĔНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Заготзерно пунктне кашни кунах çĕршер лав тырă килет. Ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен колхозниксем тивĕçлипех кунта йĕркелĕх тума ыйтаççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи Заготзерно пунктне çитсен вĕсем час-часах кӳренеççĕ. Мĕншĕн тесен кунта нимĕнле йĕркелĕх те çук. Заготзерно управляющийĕ Браницына юлташ тырă турттарса килекен колхозницăсене тивĕçлипе кĕтсе илессине йĕркелемен. Тырă пахалăхне сăнакан Роза Ивановăпа Мария Краснова, колхозниксемпе колхозницăсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илес вырăне, вăрçса пăрахаççĕ, хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа тумаççĕ. Нумаях пулмасть, Заготзерно пунктне Çĕрпӳ районĕнчи «Красный флаг» колхозран колхозницăсем виçĕ лавпа тырă турттарса пынă. Тырă нӳрлĕхне тата тасалăхне тĕрĕслекен Иванова Краснова колхозницăпа вăрçса кайнă. Çавна пула вăл Краснова лавне «чĕрĕ, таса мар» тесе йышăнман. Красновăпа пĕрле килнĕ икĕ колхозницăн тыррине вара лайăх тесех йышăннă. Çакăн пек тĕслĕхсене кунта кашни кунах тĕл пулма пулать.

Заготзерно пунктĕнче нимĕнле агитаципе массăллă ĕç те çук. Стена хаçачĕсем тухмаççĕ. ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ Трофимов юлташ колхозниксем хушшинче ĕçлеме агитаторсем уйăрнă, анчах та агитаторсем Заготзернора сахал пулаççĕ, Трофимов юлташ хăй те унта пĕрре те пулман. Лозунгсемпе плакатсем ниçта та çук. Тырă илсе килнĕ колхозниксене канма, апатланса тата чей ĕçсе ăшăнма вырăн çук.

Тырă виçсе илекенсем колхозниксене вăрçса çеç тăраççĕ, тырра тĕрĕс мар виçсе илнĕ тĕслĕхсем те пулнă. Колхозниксем хирĕçлесен, вĕсене хăваласа кăларса яраççĕ. Склад патĕнчи сортировкăсем юсавсăр, çумăр вăхăтĕнче лавсене тăратма лупасайсем çителĕксĕр.

Сĕнтĕрвăрри склачĕ ыраш илме чарăнни чылай вăхăт иртрĕ. Анчах та Браницына ун çинчен колхозсене мар, районсене те пĕлтермен. Çапла вара кашни кунах ыраш тиенĕ лавсем Заготзерно складне пырса каялла каяççĕ.

10 колхоз государствăна тырă парса татнă

ШĂМĂРШĂ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Паянхи кун тĕлне «Новая деревня», «Динамо», «Триер», «Победа», Максим Горький ячĕпе тăракан, «Заря», «Канаш», «Юлдаш», «Заря свободы» тата Космовский ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Çак колхозсем сентябрь уйăхĕнче авăн çапса пĕтерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

* * *

Чурачăк районĕнчи «Прогресс» голхоз (председателĕ Ефремов юлташ) гесударствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă. Кунта 6 вăкăрпа тырă леçнĕ. Халĕ вĕсемпе хиртен кĕлте турттараççĕ. Шуркассинчи «Первое мая» тата «Шумашар» колхозсем те государствăпа тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарнă.

Вунăкунлăх иртрĕ, тырă вырса пĕтермен

Йĕпреç районĕнчи «МОПР» колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче ытла та юлса пырать. Вунăкунлăх иртрĕ, анчах тĕштырăсене вырса пĕтермен, государствăна тырă памалли графика пурĕ те 25 процента яхăн кăна тултарнă. Колхозра пурăнакан çынсене тата туртăм вăйне пĕтĕмпех тырпул пухса кĕртес ĕçе мобилизацилесен, çак вăя тĕрĕс вырнаçтарса тухсан, колхоз пур ĕçе те вăхăтра тума пултарать. Колхозра ĕç дисциплини çук. П. Прокопьева, А. Ильина колхозницăсем—вăйпитти çынсем, çапах та вĕсем ĕçе тухмаççĕ. Н. Антонов колхозра ĕçлеме тивĕç, анчах вăл кӳршĕри колхоза кайса çĕрулми подвалĕ алтма кĕрешнĕ.

Ял Совет председателĕ Антонова юлташ колхозра тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пынипе интересленмест.

П. КУРАКОВ.

2 ЦЕНТНЕР КОК-САГЫЗ ТЫМАРĔ

ШĂХАСАН. Тури Сурăмри «Заря» колхоз кăçал 4 гектар çинчен 9 центнер кок-сагыз тымарĕ тата 8 килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ пухса илчĕ. Кок-сагыз тымарне типĕтсен, 2 центнер пулчĕ. Халĕ кок-сагызăн тымарне те, вăрлăхне те пĕтĕмĕшпех государствăна пачĕ.

Ст. АСЛАН.

И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конгресĕн членĕсене йышăнни

1945 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Конгресĕн членĕсене Уиллиам М. Колмер, Клиффорд Р. Холп, Джей Ле Февр, Сид Симпсон, Джесси П. Уолкотт, Черльз Уолвертон, Орвилл Зиммерман господинсене, çавăн пекех тата Вăрçă хыççăнхи тапхăрти экономика политикипе планировани комитечĕн тĕпчев ушкăнĕн Директорне Мервей Б. Филсом господина тата Гарварди университетăн порфессорне, Çар производство бюровĕн Вице-председательне У. Элиот господина йышăннă.

Йышăнура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Поверенныйĕ Кеннан господин пулнă.

И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совечĕн членне—Клод Пеппера йышăнни

1945 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Сеначĕн членне Клод Пеппер господина йышăннă.

Йышăнура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Поверенныйĕ Кеннан господин пулнă.

Ял Совет председателĕсен 3 уйăхлăх курсĕ

РСФСР Совнаркомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, 1944 çулта Шупашкарта ял Совет председателĕсене хатĕрлекен 3 уйăхлăх курс ĕçлеме тытăннă. Çак курс ял Совет председателĕсен политикăллă тата пĕтĕмĕшле пĕлĕвне ӳстерес, вĕсене совет строительствин тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе паллаштарас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Курсра хулари аслă шкулсенче вĕрентекен преподавательсем, доцентсем, профессорсем вĕрентеççĕ. Çавăн пекех курсри лекцисене час-часах ВКП(б) Обкомĕнче, ЧАССР Совнаркомĕнче тата ЧАССР Верховный Советĕнче ĕçлекен партипе совет руководителĕсем те вулаççĕ. Хăй ĕçлеме тытăннăранпа çак курс ял Совет председателĕсене вĕрентсе кăларас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ. Анчах та хăшпĕр чухне ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕсем çак курссене вĕренме çынсем ярасси çине ытла та сиелтен пăхаççĕ. Райсовет исполкомĕсен айăпне пула хăшпĕр чухне курсантсем вĕренме 10—15 кун кая юлса килеççĕ, тепĕр чухне тата район Совечĕсем курсантсене вĕрентме пăрахса, ĕçе тытăнма хушаççĕ. Кун пек тĕслĕхсем Ишлей, Калинино, Сĕнтĕр районĕсенче пулнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх кăçал çак курс октябрĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнмалла. Вĕренӳ кунĕсем пуçланасси нумай юлмарĕ, çавăнпа районсен Совет исполкомĕсен курсра вĕренекенсене халех тупса хатĕрлемелле.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çыхăну Халăх Комиссариачĕнче

ВЦСПС-па Çыхăну Халăх Комиссариачĕ август уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту итогĕсене пăхса тухнă хыççăн Шупашкарти линейно-техническ узел коллективне (начальникĕ А. Панов, парторганизаци секретарĕ С. Красильников, профорг Е. Никитина) ВЦСПС-па Çыхăну Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан преми пама йышăннă.

Ремеслапа чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илесси пуçланчĕ

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче государствăн ĕç резервисене хатĕрлекен ремеслапа чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илесси пуçланчĕ. Халĕ хулари çамрăксене вĕренме илеççĕ, октябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа ялти çамрăксене илме тытăнаççĕ. Вĕренме илес ĕç ноябрĕн 15-мĕшĕчен пырать. Çак хушăра Совет Союзĕпе пурĕ 455 пин çамрăк ачасемпе хĕрачасене вĕренме илмелле.

Государствăн ĕç резервисене хатĕрлекен шкулсемпе училищесене вĕренме илесси—государствăн пысăк ĕçĕ. Çамрăксене вĕренме илес тĕлĕшпе хуласемпе район центрĕсенче комиссисем тунă, вĕсене вырăнти советсен исполком председателĕсем ертсе пыраççĕ.

Республикăри ремеслапа чугун çул училищисем, ФЗО шкулĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне тата çамрăк вĕренекенсене кĕтсе илме хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă: вĕренӳ кабинечĕсемпе мастерскойсене, общежитисемпе столовăйсене юсанă, ачасене вĕренме тата пурăнма кирлĕ япаласене хатĕрлесе хунă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне Çĕмĕрлери ремесла училищи уйрăмах лайăх хатĕрленсе кĕтсе илет. Кунта училищăн мĕнпур çурчĕсене юсаса тухнă, вĕренӳ пӳлĕмĕсене, общежитисене пĕтĕмпех хатĕрленĕ. Канашри чугун çул училищи те çак черетре вĕренме пыракансене тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илет. Сĕнтĕрвăрринчи 4-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ çумĕнче производствăна вĕрентекен мастерсен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе ятарласа уçнă курс ĕçлет. Канашри чугун çул училищине çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрлеме вагонсем юсакан завод директорĕ Поздняков юлташ нумай пулăшнине палăртмалла. Çĕмĕрлери «Большевик» заводпа комбинат директорĕсем Шустинпа Шаройко юлташсем те унти ремесла училищине пысăк пулăшу панă.

Анчах та республикăра çĕнĕ вĕренӳ çулне тата çамрăк вĕренекенсене кĕтсе илме начар хатĕрленекен училищесемпе шкулсем те пур. Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ тата Улатăрти 5-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕсен вĕренӳ пӳлĕмĕсемпе пурăнмалли çуртйĕрĕсене юсас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем нумай-ха. Çак шкулсене тытакан предприятисен директорĕсем Бунинпа Крупский юлташсем ачасене вĕренме тата пурăнма кирлĕ условисене туса парассишĕн сахал тăрăшаççĕ.

Ремеслапа чугун çул училищисен тата ФЗО шкулĕсен вĕренме кĕрекенсене тивĕçлипе кĕтсе илес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Вĕренӳпе производство çурчĕсене, общежитисемпе столовăйсене пĕтĕмпех юсаса çитермелле, тупса хумалла. Çак ĕçре училищесемпе шкулсене предприятисен тивĕçлĕ пулăшу памалла.

Кăçал пирĕн республикăра ĕç резервисене хатĕрленĕ çĕре пурĕ 1750 çамрăка вĕренме илмелле. Вăл шутран 1100 çын ФЗО шкулĕсене, 650 çын ремеслапа чугун çул училищисене илмелле.

Халĕ хуласенче çамрăксене вĕренме илес ĕç пуçланчĕ. ФЗО шкулĕсене 16—17 çулхи арçын ачасемпе 16—18 çулхи хĕрачасене, ремеслапа чугун çул училищисене—14—15 çулхи арçын ачасемпе 15—16 çулхи хĕрачасене илмелле.

Пирĕн çамрăксем фабрикăпа завод, ремеслапа чугун çул ĕçĕсене вĕренме хавасланса каяççĕ. Çĕмĕрлери ремесла училищине вĕренме кĕме 60 ача, Канашри чугун çул училищине 25 ача хăйсен ирĕкĕпе заявлени панă.

Анчах та ĕç резервисене хатĕрлеме кирлĕ çамрăксем пурте хăйсен ирĕкĕпех вĕренме кĕрессе шанса ларма çук. Вырăнти совет органĕсен çул çитнĕ çамрăксене мобилизаци йĕркипе те вĕренме илмелле. Районсемпе хуласенчи çамрăксене çак ĕçре профсоюзпа комсомол организацисен пулăшса пымалла.

Çамрăксене ремеслапа чугун çул училищисене вĕренме илес ĕçе лайăх иртерер!

Флот адмиралĕ Совет Союзĕн Геройĕ Н. Г. КУЗНЕЦОВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Флот адмиралне Николай Герасимович Кузнецова Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Флотсене, вăл шутра Лăпкă океан çинчи флота çапăçусенче ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусене пула тунă çитĕнӳсемшĕн флот адмиралне Николай Герасимович Кузнецова, Ленин орденĕпе «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса, Совет Союзĕн Геройĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Иван Степанович Юмашев адмирала Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Япони империалисчĕсене хирĕç пынă çапăçусенче Лăпкă океан çинчи флотăн чаçĕсемпе карапĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав çапăçусене пула тунă çитĕнӳсемшĕн Иван Степанович Юмашев адмирала, Ленин орденĕпе «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса, Совет Союзĕн Геройĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕ.

РЕСПУБЛИКĂРА СЕНТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ПРОДУКЧĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Çулталăкри плана тултарнă, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Аш-какай	Сĕт	Çăмарта
Красноармейски	93,3	84,4	87,1
Çĕрпӳ	79,9	85,2	80,5
Октябрьски	71,9	52,8	41,9
Тăвай	66,9	50,8	30,3
Сĕнтĕр	65,9	68,8	48,3
Элĕк	65,5	65,0	48,9
Сĕнтĕрвăрри	65,2	72,6	43,3
Хĕрлĕ Чутай	61,4	46,5	26,7
Куславкка	59,5	55,8	52,6
Шупашкар	59,1	88,0	53,4
Вăрмар	58,5	63,3	41,5
Муркаш	57,9	72,6	56,3
Вăрнар	56,0	54,0	39,1
Чурачăк	55,9	62,7	47,3
Ишлей	55,0	69,1	27,0
Елчĕк	53,6	54,1	26,2
Советски	50,1	50,3	37,1
Етĕрне	49,4	74,1	33,5
Шăхасан	46,3	46,5	25,9
Канаш	45,8	62,6	27,2
Улатăр	43,8	69,3	23,6
Çĕмĕрле	43,2	47,2	17,4
Первомайски	42,4	42,2	15,7
Комсомольски	40,9	32,7	30,0
Калинино	36,6	68,3	22,6
Чкаловски	36,5	38,8	16,7
Шăмăршă	33,2	28,0	10,2
Йĕпреç	24,6	43,2	19,2
Пăрачкав	17,7	43,0	12,3
Кувакино	14,6	44,2	4,7

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕССИШĔН ТĂРĂШМАÇÇĔ

Шупашкар районĕнчи Шуркка ял Советĕнчи «Победа» колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшмаççĕ. Колхозра çак кунсенче кăна хĕл каçнă икĕ вăкăр вилнĕ. 4 çул хушшинче колхоз 7 кĕсререн 2 тиха кăна илнĕ.

П. ТАРАСКИН.

Вырăссен аслă полководецӗ М. И. Кутузов

Профессор Н. КОРОБКОВ

Михаил Илларионович Кутузов—1812 çулхи Отечественнăй вăрçă геройӗ—вырăссен аслă полководецӗсен хисепне кӗрет. Унăн ячӗпе вырăс государствин историйӗнчи ӗмӗр манма событисем çыхăнса тăраççӗ.

Пирӗн Тăван çӗршывăн мухтавлă патриочӗ çурални 200 çул тултарнă куна (1945 çулхи сентябрӗн 16-мӗшне) совет халăхӗ хамăрăн Тăван çӗршыв вăрçăра та, политика тӗлӗшпе те питӗ пысăк çитӗнӳсем тунă тапхăрта палăртать. Хӗвеланăçӗпе Хӗвелтухăçӗнче агрессин вăйӗсене хирӗç пынă вăрçă пирӗн çӗнтерӳпе пӗтни совет халăхӗн иксӗлми вăй-хăватне, Хӗрлӗ Çарăн вăрçăри пысăк та паттăрла искусствине кăтартса парать. Сталин генералиссимусăн стратегийӗ, операцисемпе тактикăна сталинла ертсе пырас искусство пек искусство историре пулман, анчах çакăнпа пӗрлех вӗсем иртнӗ вăхăтпа таччăн çыхăнса тăраççӗ. Вырăссен çар искусствин чи çӳлти пусăмӗ пулса тăраççӗ. Вырăссен çар искусстви аталанса пыни Петр Великий, Суворов, Кутузов тата ыттисен ячӗсемпе палăрса тăрать.

Кутузов хальхи вăхăтри евӗрлӗ пысăк çарсене ертсе пынă вырăссен чи малтанхи полководецӗ пулнă.

Вырăссен иртнӗ вăхăтри çар шкулӗн мӗнпур опычӗпе усă курса вăл çарсене ертсе пымалли çӗнӗ мелсем, операцисенче çарсемпе усă курмалли çӗнӗ мелсем тунă, çапла вара вăл вырăссен çар искусствин аталанăвӗнчи çӗнӗ тапхăра тăвакан пулса тăнă.

* * *

Кутузов инженерипе артиллери шкулӗнче вӗреннӗ чухнех хăйӗн пултарулăхне кăтартса панă. Унăн математикăри пӗлӗвӗпе пултарулăхне кура, 15 çул тултаричченех ăна çак дисциплинăна вӗрентекенӗн помощникӗ туса хунă.

Строевой, унтан вара боевой службăна Кутузов Астраханьри пехотнăй полкра офицер пулса пуранса иртернӗ. Ку полкăн командирӗ ун чухне Суворов пулнă. Çапăçусемпе походсенче вăл «пӗчӗк вăрçăсен» уйрăмлăхӗсене, партизанла ӗçсем тума вӗренсе пынă. 1770 çулхи кампани, П. А. Румянцев фельдмаршал ертсе пынăскер, Кутузовшăн çар искусствин пысăк шкулӗ пулнă. Вырăссен 40.000 çынран тăракан çарӗ умӗнче туроксемпе тутарсен 300.000 çынран тăракан çарӗн темиçе ушкăнӗ тăнă. Румянцев хăюллă та хăвăрт наступлени туса пынă. Рябая Могила патӗнче вăл тăшманăн 80.000 çынран тăракан гарнизонне аркатса тăкнă. Ларго-Кагуль çывăхӗнчи операцире Румянцев хăйӗн 97.000 çынран тăракан çарӗпе аслă визирăн 150.000 çынран тăракан тӗп çарне аркатса тăкнă. Çав вăхăтрах тылри 11.000 çынран тăракан отряд тăшманăн 80.000 çынран тăракан утлă çарне, хăйсен тӗп вăйӗпе пӗрлешме хăтланнăскере, тытса чарнă.

Кутузов çак походсемпе сражениесене активлăн хутшăннă. Вăл — 25 çулти офицер—вăрçăра çав тери пултарулăх кăтартнă пирки ăна корпус штабӗн начальникӗ туса хунă. Тăшмана аркатса тăкас ӗçре вăл паллă вырăн йышăнса тăнă.

1774 çулта, полковник чинне илнӗ хыççăн, Кутузова амантнă. Врачсем ăна вилет пуль тесе шутланă. Пуля сулахай тăнлава пырса кӗнӗ те сылтăм куç патӗнчен тухса кайнă. Анчах Кутузов чӗрӗлнӗ.

Турцие хирӗç пулнă иккӗмӗш вăрçăра (1787—1791 çулсенче) Очакова хупăрласа илнӗ вăхăтра Кутузов генерал-майора татах тепӗр хут йывăр амантнă: пуля пит çăмартинчен кӗрсе ӗнсе хыçӗнчен тухса кайнă. Анчах тепӗр çултан вăл каллех вăрçăра пулнă. Унпа пӗрле Суворов Измаила штурмламалли плана сӳтсе-явнă, ăна Суворов чи ответлă колоннăна ертсе пыма хушнă. Çӗнтерӳ çинчен пӗлтернинче Суворов Кутузова уйрăмах палăртнă: «Вăл манран сулахай енче пычӗ, анчах вăл манăн сылтăм аллăм пулчӗ»,—тесе çырнă полководец.

Измаил хулин комендантӗ пулнă вăхăтра Кутузов Мачинпа Бабадага патӗнче пулса иртнӗ операцисенче чапа тухнă. Вăл нумай штурмсемпе çапăçусенче пулнă, çав çапăçусен ăнăçăвӗсене пула вара тăшманăн Россия сӗннӗ условисене йышăнса мир тума тивнӗ.

Кутузовăн çав тери пысăк пултарулăхӗ çапăçу хирӗнче çеç палăрман. Мирлӗ вăхăтра вăл генерал-губернатор пулса çарпа административлă пысăк ӗç туса пынă, ăна тивӗçлипех юратса сума сунă. Малашнехине курма пултарни, чăтăмлăх, лăпкăлăх, нумай пӗлни тата калаçма пултарни Кутузова питӗ пысăк дипломат туса хунă. Вăл дипломатири питӗ кăткăс ӗçсене темиçе хутчен те пурнăçа кӗртнӗ, çав ӗçсене профессионал-дипломатсем те тума пултарайман.

Çарсен паллă воспитателӗ Кутузов вырăс офицерӗсене вӗрентсе хатӗрлессине лайăхлатас тӗлӗшпе питӗ пысăк ӗç тунă. Вырăс çарӗн главнăй шкулӗн—Тип çӗр çинчи кадетсен корпусӗн генерал-директорӗ пулнă вăхăтра Кутузов унăн организацилӗхне лайăхлатнă, программăна аслăлатнă, тактикăпа тата çар историне вӗрентес ӗçе лайăхлатнă. Çак дисциплинăсемпе вăл лекцисене хăй вуланă. Унта вӗреннӗ офицерсем каласа панă тăрăх, вӗренекенсем унăн лекцийӗсене пит те тимлӗн итленӗ.

Суворов вилнӗ хыççăн (1800 çулта) Кутузов вырăссен нациллӗ çар искусствин тӗп представителӗ пулса тăнă. Ун çине обществăра та, çарта та çавăн пек пăхнă. Шăпах çакăн пирки те ӗнтӗ I-мӗш Александр патша, Кутузова юратманскер, ăна ӗçрен кăларса янă. Çакă ӗнтӗ Наполеон Европăна çӗнтерсе илме пуçланă вăхăтра пулнă. 1805 çулта Россия Австрипе пӗрле, Англие пулăшас тесе, Наполеона хирӗç вăрçă пуçласа янă. Çакăн пек лару-тăру вăхăтӗнче ӗнтӗ Александр патша Кутузова вырăссен 1-мӗш армийӗн главнокомандующийӗ тума килӗшнӗ.

Çак кампанире, ун хыççăн Турцие хирӗç пулнă Молдаври кампанире (1811 çулта) полководецăн питӗ йывăр та хăрушă условисенче çапăçма тивнӗ.

Тăшманăн вăйӗ темиçе хут ытларах пулнă; çавăнпа та усă çапăçусенче ăна çӗнтерессишӗн çинчен шухăшлама та май килмен. Шăпах çак вăхăтра ӗнтӗ Кутузов вăрçăн çӗнӗ тактикине шутласа кăларнă. Çак тактика тăрăх чакса пыни пуçарулăха çухатнине пӗлтермен, вăл тăшмана малашне çӗнтерме хатӗрленес тесе маневрсем тунине пӗлтернӗ. Кутузов çарăн тӗп вăйне çăлас тесе, пулăшу килессине кӗтсе чакса пырса тăшмана хăйӗн коммуникацийӗсене вăрăмлаттарнă тата ытлашши шала кӗрсе кайнă чаçӗсене вăйлăн пыра-пыра çапса ăна хавшатса пынă. 1805 çулхи кампанин вӗçне Александр императорпа Австрин Франц императорӗ пăснă. Вӗсем Кутузов планӗпе килӗшмесӗр халех çапăçу пуçласа яма хушнă. Çакăн пирки ӗнтӗ вырăссемпе Австри çарне Аустерлиц çывăхӗнче аркатса тăкнă. Молдави кампанинче Кутузов хăйӗн планне вӗçне çитиех йӗркеллӗн пурнăçа кӗртме пултарнă пирки тăшмана аркатса тăкнă. Вăрçăри ăнăçупа полководец дипломати енӗпе те питӗ ăстан усă курнă. Наполеонăн «аслă çарӗ» Российăна килсе кӗрес умӗн Кутузов тăшмана «ӗмӗр-ӗмӗрлӗх трактат» çыртарса алă пустарнă, çав трактат тăрăх Бессараби Россия аллине куçнă.

Михаил Илларионович Кутузовăн 1812 çулччӗнхи кун-çулӗ çакăн пек пулнă. 1812 çул Россия çине Наполеон çарӗ килсе кӗнипе паллă пулса тăрать. Александр император Кутузова главнокомандующи тăвасшăн пулман, анчах та фронтри лару-тăру хăрушланнăçемӗн хăрушăланса пынă. Çӗршывра пăлханусем пуçланса кайнă, Российăна Кутузов çеç çăлса хăварма пултарать, тенӗ сасăсем хытăрах илтӗнме пуçланă. Юлашкинчен Александр халăх ирӗкӗпе килӗшсе, Кутузова вырăс çарӗн главнокомандующийӗ туса хунă.

Кутузов главнокомандующи чысӗпе вырăнне йышăннипе пӗр вăхăтрах хăй çине тата çав тери пысăк ответлăх илнӗ: Российăн кунçулӗ çӗнӗ вăхăтри пысăк полководецпа хирӗç, Наполеона, вырăс çарӗпчен висӗ хута ятăн пысăкрах çара ертсе пыраканскере хирӗç кӗрешес ӗçри вăрçăри искусствăран килнӗ. Çак аслă тапхăр, Наполеона аркатса тăкнипе пӗтнӗскер, мӗнле аталанса пынипе мӗнле вӗçленнин историне пурте пӗлеççӗ. Анчах та Кутузов Европăна çавăрса илнӗ Наполеон çарне, хăйӗн составне Франци пăхăнтарнă пур государствăсен çарӗсене те кӗртнӗ çара мӗнле майпа çӗнтерме пултарнă-ши?

Лев Толстой халăхăн нациллӗ ăслăлăхӗ çинчен каланă май, Кутузов вăл «çав нациллӗ ăслăлăха хăйӗнче таса та вăйлăн илсе çӳренӗ», тесе палăртнă. Çак ăслăлăхра вăл халăхăн партизанла вăрçин пӗлтерӗшне тӗрӗс хакламалли май тупнă. Партизанла вăрçă Кутузовăн пӗтӗмӗшле стратегилле планӗнче питӗ паллă вырăн йышăнса тăнă. Лару-тăрăва тӗрӗс ăнланни тата иртнӗ кампанисен опытне шута илни ватă полководеца тăшманăн наступленине, тăшмана вăйсăрлатмалли, кайран вара ăна аркатса тăкмалли мел туса хума вӗрентнӗ.

Бородино çывăхӗнче Кутузов тăшмана çав тери вăйлăн, урăх вăй илейми тумалла пырса çапнă. Бородино хыççăн Мускав урлă Тарутинăпа кайнă марш-маневр стратеги енчен пуçарулăх вырăс полководецӗн аллине куçнипе пӗлтернӗ. Мӗншӗн тесен Кутузов кунтан кирек хăш самантра та тăшманăн коммуникацийӗ çине тухма пултарнă. Малоярославец çывăхӗнчи çапăçу тата тулашӗнчен пăхсан, Полотнянăй завод патӗнче чакнă евӗрлӗ маневр туни, Наполеонăн кăнтăр еннелле чакмалли çулне питӗрсе лартнăскер, Франци çарне аркатса тăкассине палăртса хунă. Кӗтме пӗлни, çӗнтерӗвӗн тулашӗнчи илемлӗхне юратманни, тăшмана яланах хупăрласа илессипе хăратса хăваласа пыни, çарăн партизанла отрячӗсемпе ăстан усă курни, вăхăта гениллӗ шута илни, — çаксем пурте ӗнтӗ, вырăс салтакӗсемпе офицерӗсен паттăрлăхӗпе пӗрле, Европăри чи хăватлă çара парăнтарассине çеç мар, тата ăна аркатса тăкассине те палăртса хунă.

Вырăс халăхӗпе унăн çарӗ Европăна çӗнтерсе илекене аркатса тăкма пултарнă вăй пулса тăнă. Вырăс халăхӗн ирӗкӗпе шухăшне творчествăлла кăтартса параканӗ, унăн наци генийӗ Кутузов пулнă.

* * *

Наполеон пăрахса хăварнă çарăн мӗскӗн юлашкийӗсене хăваласа пырса вырăссем Россия чикки урлă каçнă та Европăна чуралăхран хăтарассишӗн кӗрешме пуçланă. Прусси королӗн Фридрих Вильгельмăн—Наполеон союзникӗн çарӗсем хирӗç тăнине аркатса вырăссем 1812 çулхи декабрь уйăхӗнче Тильзитпа Кенигсберг хулисене йышăнса илнӗ, тепӗр çулăн пуçламăшӗнче Пруссин çурçӗрти пайне пӗтӗмпех тасатнă та вара февралӗн 20-мӗшӗнче Берлин хулине пырса кӗнӗ. Çакă ӗнтӗ Берлин хулине вырăс çарӗсем иккӗмӗш хут йышăнса илни пулнă (малтанхи хут 7 çулхи вăрçă вăхăтӗнче 1760 çулта йышăнса илнӗ пулнă). Вырăс çарӗ Эльбăна çити çаралса выртакан çав тери пысăк территорие йышăнса илнӗ, унтан вара малалла куçса пырса, Франци государствин çӗрӗ çине кӗрсе кайнă. Вырăссен çӗнтерӳ тăвакан çарӗсем Франци столицине пырса кӗрес вăхăт çывхарса килнӗ.

Шăпах çак вăхăтра ӗнтӗ, вырăс çарӗн мухтавлă ӗçӗсем çӗкленсе пынă вăхăтра, унăн ватă полководецӗ, сур ӗмӗре яхăн салтакăн йывăр пурнăçне пуранса иртернӗскер тата вырăс çарӗн мухтавлă похочӗсемпе çапăçăвӗсенче пулнăскер, шанса йывăр чирленӗ те 1913 çулхи апрелӗн 14-мӗшӗнче нимӗçсен Бунцлау ятлă хулинче (Силезире) пӗр пӗчӗк çуртра вилсе кайнă.

«Кутузовăн мухтавӗ, — тесе çырнă А. С. Пушкин,—Российăн мухтавӗпе, çӗнӗ историри аслă событипе питӗ таччăн çыхăнса тăрать... Унăн ячӗ пирӗншӗн çав тери таса. Пирӗн, вырăссен, çав ят вырăс сăмахӗпе янăранăшăн хаваслăнмалла мар-и-ха!».

Кутузов вилнӗ хыççăн нумай çулсем иртсен халăхпа çар хушшинче ун çинчен хывнă халлапсемпе юмахсем çӳренӗ. Вăл халăх геройӗ пулнă, хальхи вăхăтра та вăл халăх геройӗ пулса тăрать. Совет халăхӗ гитлерла захватчиксене хирӗç Отечественнăй аслă вăрçа çӗкленнӗ кунсенче унăн сăнарӗ пирӗншӗн татах та усăмлăрах, çывăхрах та ăнланмаллăрах пулчӗ. Совет çыннисемшӗн вăл çав тери аслă та тӳрӗ кăмăллă патриотизмăн, Тăван çӗршыва çав тери юратнин примерӗ пулса тăрать. Кутузов вăл çав тери паттăр, лăпкă та усă кăмăллă çын пулнă, вăл çирӗп ирӗклӗхе аслă ăс-хакăлпа пӗтӗçтернӗ, хăйӗн решенисемшӗн тата салтак пурнăçӗшӗн мӗнпур ответлăха хăй çине илнӗ. Вăл походсем тума хăраман, кирлӗ чухне вара усă çапăçусенчен те хăраман, мӗншӗн тесен çӗнтерӳ жертвăсемсӗр пулма пултараймасть. Анчах вăл кашни салтакăн пурнăçне çирӗп сыхланă, май килнӗ таран сахалрах çухату кӳрсе çӗнтерӳ тума тăрăшнă. Аслă полководец хăйӗн çарне юратнă, ăна ӗненсе шанса тăнă, вăл хăйӗн халăхӗпе Тăван çӗршыва та ӗненсе шанса тăнă. Вăл Российăшăн тӳрӗ кăмăлпа тӗрӗс ӗçлесе пурăннă, хăйӗн çӗнтерӗвӗсен мухтавне çарпа халăха панă. Унпа пӗр вăхăтра пурăннă çынсем çапла каласа параççӗ: Кутузов тăшманран тытса илнӗ ялавсене, Наполеон çарне çӗнтернине кăтартса параканскерсене, пăхса тухнă чухне çав ялавсене салтаксем умӗнче усăнтарма приказ панă. «Российăна çăлакана урра!»—тесе кăшкăрнă воинсем. Çакăн пек чи чаплă мухтава Кутузов малтанхи хут илтсен савăннипе чӗтреме тытăннă. Вара вăл тенкел çине хăпарса тăнă та хыттăн çапла каланă: «Çитӗ ӗнтӗ, тусăмсем, çитӗ! Ку мухтав манăн мар, вăл вырăс салтакӗн!» Вара хăйӗн картусне çӳлелле ывăтса мӗнпур вăйӗпе: «Урра, урра, урра, вырăс салтакне!» тесе кăшкăрса янă. Çакăн хыççăн вара ăна: Наполеона çӗнтерекенӗ тата Российăна çăлса хăвараканӗ, тесе каласан, вăл час-часах çапла ответ панă: чăнчăн çӗнтерекенӗ вăл вырăс халăхӗ пулать, Россия 1812 çулхи историллӗ тӗрӗслевре пек хăйӗн вăй-хăватне кăтартсан тата çав сăн-сăпата сыхласа усрасан, ăна ӗмӗрне те никам та çӗнтереймӗ.

Пирӗн вăхăтра, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтӗнче Тăван çӗршыва çакăн пек хӗрӳллӗн юратни, уншăн паранса ӗçлеме хатӗр пулни татах та вăйлăн палăрчӗ. Отечественнăй аслă вăрçă эпир фашистла Германие тата империалистла Японие çӗнтернипе вӗçленчӗ. Çаксем питӗ, совет çыннисен çак пахалăхӗсем, Ленинпа Сталинăн гениллӗхӗ çитӗнтернӗскерсем, пирӗн тӗрӗс ӗç çӗнтерессин никӗсӗ тата хамăрăн Тăван çӗршывăн пӗрлӗхӗпе вăй-хăватлăхне çитӗнтермелли никӗс пулса тăрать.

Ют çӗршыв ӗçӗсен Министрӗсен Совечӗ пӗлтерни

ЛОНДОН, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, халӗ Лондонра ӗçлекен Ют çӗршыв ӗçӗсен Министрӗсен Совечӗ ячӗпе сентябрӗн 14-мӗшӗнче каçхине Лондонра официальнăй йӗркепе çакăн пек пӗлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Сентябрӗн 14-мӗшӗнче Совет икӗ лару туса иртернӗ. Ирхи ларура Китайăн Ют çӗршыв ӗçӗсен Министрӗ Ван Ши-цзе доктор председатель пулнă, кăнтăрлахи ларура Америкăри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Государство секретарӗ Джеймс Бирнс председатель пулнă. Советăн çитес ларăвӗ сентябрӗн 15-мӗшӗнче кăнтăрла иртсен 3 сехетре пулать.

Совет Италипе тумалли мирлӗ договорăн условийӗсене сӳтсе-явма пуçланă.

Çапла йышăннă: Италипе вăрçнă Пӗрлешнӗ нацисене пурне те çав ыйту тӗлӗшпе вӗсем мӗнле шухăшлани çинчен вӗсем хăйсем çырса парас тесен, çырса пама сӗнмелле. Çавăн пекех тата çапла йышăннă: лару председателӗ пулнă Ван Ши-цзе доктор Совет ячӗпе Югославие, Италие, Австралие, Канадăна, Индие, Çӗнӗ Зеландие тата Африка Союзне, вӗсем хăйсем кирлӗ тесе шутласан, пӗрер представитель яма сӗнмелле. Çав представительсен, Ют çӗршыв ӗçӗсен Министрӗсен сентябрӗн 17-мӗшӗнче пулса иртмелли ларăвне пырса, Югославипе Итали чикки пирки хăйсен правительствисем мӗнле шухăшлани çинчен каласа кăтартмалла.

Совет сентябрӗн 14-мӗшӗнче пилӗк делегацин Пӗрлешӳллӗ секретариатне тăвас тӗлӗшпе заместительсем панă сӗнӳсене ырланă.

П. ГРОЗА ТАТА Г. ТАТАРЕСКУ БУХАРЕСТА ТАВРĂННИ

БУХАРЕСТ, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер 17 сехетре Бухарест хулине Мускавран Румыни правительствин делегацийӗ таврăннă. Вăл делегацине П. Гроза тата Г. Татареску ертсе пынă. Аэропортра делегацие халăх мӗнле кӗтсе илни Румыни халăхӗ хăйӗн правительствипе пӗрле пынине питӗ лайăх кăтартса парать. Самолет вӗçсе çитиччен нумай малтан аэродрома 200.000 çын ытла пухăннă. Вӗсем унта йӗркеллӗн, колоннăсене тăрса, Румынин тата Совет Союзӗн ялавӗсене, Гроза докторăн портречӗсене тата çакăн пек лозунгсене йăтса пынă: «Сывă пултăр Петре Грозан аплă демократиллӗ правительстви», «Сывă пултăр Совет Союзӗнчи аслă халăхсемпе туслăн пурăнни». Аэропорта Совет Союзӗн тата Румынин ялавӗсене çакса илемлетнӗ. Делегацие кӗтсе илме хисеплӗ хурал тăратнă. Самолетпа килнисене правительство членӗсем, çарăн аслă командирӗсем, профсоюзсемпе политикăллă партисен деятелӗсем, çавăн пекех тата Союзниксен Контроль Комиссийӗн членӗсем, Совет посольствин сотрудникӗсем, Англипе Америка корреспонденчӗсем хирӗç тухса кӗтсе илнӗ.

Çавăнпа пӗр вăхăтрах Мускавран Совет Союзӗн Румынири Посолӗ С. И. Кавтарадзе тата Союзниксен Контроль Комиссийӗн Председателӗн Заместителӗ И. З. Сусайков генерал-полковник вӗçсе çитнӗ.

Хулари халăх мӗн иртенпех праçник чухнехи пек савăннă. Халăх хаçатсенчен Мускавра тунă килӗшӳсем çинчен вуланă. Кăнтăрла иртсен, хулан вăтаçӗрти урамӗсемпе аэропорт патнелле вӗçӗ-хӗррисӗр çын кайнă.

Самолет çинчен ансан, Гроза, Татареску тата делегаци членӗсем хăйсене кӗтсе илнӗ çынсемпе пӗрле хисеплӗ хурал умӗнчен иртсе кайнă, унтан трибуна çине хăпарса тăнă. Раль профессор саламлă кӗске сăмах каланă хыççăн П. Гроза доктор сăмах тухса каланă. Вăл Мускаври калаçусем мӗнле пыни çинчен тата мӗнпе вӗçленни çинчен каласа панă. Гроза доктор «Румыни халăхӗн аслă тусӗн—Сталин Генералиссимусăн» ятне асăнсан, халăх питӗ çавăнса кайнă, хытă саламланă.

Аэропорта пухăннă çынсем правительствăна тата унăн руководительне П. Грозана, çавăн пекех тата наци демократиллӗ фрончӗн руководителӗсене хӗрӳллӗн саламланă.

ХАЛĂХА ÇИТЕЛӖКЛӖ ТАРАН ӖÇ ТУПСА ПАМАЛЛИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТА ХӲТӖЛЕС МАЙПА ВАШИНГТОНРА ПУЛСА ИРТНӖ МИТИНГ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Вашингтонра 53 организацин (рабочисен организацийӗсемпе обществăлла организацисен), çав шутра Производствăллă профсоюзсен конгресӗн, Америкăри Ӗç федерацийӗн, вăрçă ветеранӗсен, политикăллă ӗçсем тумалли комитетăн, юристсен гильдийӗн, хула мэрӗсен конференцийӗн, тӗн организацийӗсен, негрсен организацийӗн тата ытти организацисен представителӗсен митингӗ пулса иртнӗ. Митингра халăха çителӗклӗ таран ӗç тупса памалли çинчен калакан законопроекта США конгресне йышăнтарма тăрăшмалла тесе калакан резолюци йышăннă. Мэррей сенатор хăйӗн сăмахӗнче çапла каланă: çак законопроектшăн тăракан çынсем ăна хирӗç пыракансемпе килӗшес çук. Вăл законопроекта унăн чи кирлӗ шухăшӗсене пӗтермелле тӳрлетсе йышăниччен — йышăнманни лайăхрах, тенӗ.

Çав законопроекта халь сенатăн укçа-тенкӗпе банксем тӗлӗшпе ӗçлекен комиссийӗ пăхса тухать. Вăл комиссие çав законопроекта тӳрлетме сӗнсе çырнă çырусем питӗ нумай пыраççӗ. Тӳрлетме сӗннисенчен Тафт сенатор сӗнни чи малта тăрать. Тафт çапла сӗннӗ: уйрăм çынсен аллинчи промышленность пурне те ӗç тупса параймасть пулсан, законопроектăн мӗнпур çынсене ӗç тупса памалли çинчен тата пӗтӗм халăха ӗç тупса памашкăн правительство укçи-тенкине расходламалли çинчен калакан статьисене кăларса пăрахмалла, тенӗ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тăрăх, 7 сенатор тата представительсен палатин 105 членӗ çав законопроекта ырлаççӗ.

ЯПОНИ ДЕЯТЕЛӖСЕМ ХĂЙСЕНЕ ХĂЙСЕМ ВИЛНИ

ЛОНДОН, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, сентябрӗн 14-мӗшӗнче Тодзио правительствинче сывлăх министрӗ пулнă Цикахико Коидзуми хăйне хăй вилнӗ. Япони правительстви Америкăн оккупаци влаçӗсене вăрçă преступникӗсен списокӗнче кăтартнă çынсене пурне те пама килӗшни çинчен пӗлтернӗ. Çавăн хыççăн темиçе минут иртсен Цикахико Коидзуми хăйне хăй вилнӗ.

Тодзио правительствинче çутӗç министрӗ пулнă Кунихико Хасида сентябрӗн 14-мӗшӗнче наркăмăш ӗçнӗ, халӗ вăл вилес пекех выртать, теççӗ.

ТОКИО, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Токио хулинче сентябрӗн 14-мӗшӗнче Тейици Хасимото генерал хăйне хăй револьверпа чӗререн персе вилнӗ.

АВСТРИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ СУД ТУМА ХАТӖРЛЕНЕÇÇӖ

ВЕНА, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Австри правительстви вăрçă преступникӗсене суд тума хатӗрлеме ятарласа икӗ комисси тунă. Çав комиссисене юстицпе шалти ӗçсен государство секретарӗсем ертсе пыраççӗ.

Çав комиссисенчен пӗрне вăрçă преступникӗсене Зейс Инкварта, Кальтенбруннера, Бальдур фон Шираха тата Гвидо Шмидта суд тума кирлӗ материалсем хатӗрлеме хушнă. Çав материалсемпе усă курса вара асăннă преступниксене айăплакан хут çырмалла. Унтан ăна союзниксен комиссине е, вăл килӗшсен, Нюрнбергри пӗтӗм тӗнчери суда ямалла.

Иккӗмӗш комиссие Австри сучӗ пăхса тухса айăпламалли вăрçă преступникӗсен списокне çырса хатӗрлеме хушнă. Çав çынсен шутне чи малтан Австри провинцийӗсен гаулейтерӗсем пулса ӗçленӗ çынсем тата ыттисем те кӗреççӗ.

США-ра РАБОЧИСЕНЕ ӖÇРЕН КĂЛАРСА ЯНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). США-ри Ӗç резервӗсене мобилизацилес тӗлӗшпе ӗçлекен управлени çапла пӗлтерет: юлашки эрне хушшинче США-ра 270.000 рабочие ӗçрен кăларса янă, Япони парăннă хыççăнхи пӗрремӗш эрнере 1.800.000 çынна ӗçрен кăларса янăччӗ. Юлашки виçӗ эрне хушшинче мӗн пурӗ 2.370.000 рабочие ӗçрен кăларса янă. Авиаци промышленноçӗпе суднăсем тăвакан промышленность нумай сахалтарах ӗçлеме пуçланă пирки, хӗвеланăç енчи штатсенче уйрăмах нумай çынна ӗçрен кăларса янă.

ЯПОНИРЕ НИМӖÇСЕН ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

ТОКИО, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Японецсен «Асахи» хаçачӗ çапла пӗлтерет: Америка влаçӗсем Японире Мейзингер полковника тытса хупнă, çав полковник Японире Германи гестапин представителӗ пулса ӗçленӗ. Мейзингер вăрçă преступникӗсен списокӗнче тăрать, вăл Варшава халăхне 100 пин çынна вӗлернӗшӗн айăплă.

БРИТАНИРИ ТРЕД-ЮНИОНСЕН КОНГРЕСӖ

БЛЕКПУЛ, сентябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Британири Тред-юнионсен конгресӗн сентябрӗн 12-мӗшӗнче кăнтăрла иртсен пулнă ларăвӗнче Америкăри Ӗç федерацийӗн секретарӗ Джордж Мини сăмах тухса каланă. Вăл Совет Союзӗ çинчен тата Производствăллă профсоюзсен конгресӗ çинчен элеклесе каланă. Вăл тата профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери конференцийӗн ӗçне те юрăхсăр пек кăтартма хăтланнă. Мини Совет профсоюзӗсем çинчен элеклесе каланă вăхăтра залра ларакан çынсем хушшинче—«Намăс! Тӗрӗс мар!» Апла мар!» тенӗ сасăсем илтӗннӗ.

БЛЕКПУЛ, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 13-мӗшӗнче каçхине Блекпулран тухса каяс умӗн Британири Тред-юнионсен конгресӗн делегачӗ — ВЦСПС представителӗ Тарасов юлташ Британири Тред-юнионсен конгресӗн генеральнăй секретарьне Ситрина çыру янă, çав çырăва вăл Америкăри Ӗç федерацийӗн представителӗ совет профсоюзӗсем çинчен элеклесе каланине хирӗçлесе çырнă. Тарасов юлташ ыйтнипе, сентябрӗн 14-мӗшӗнче ирхине çав çырăва хаçат редакцийӗсене панă.

В. М. МОЛОТОВ ИТАЛИН ЛОНДОНРИ ПОСОЛНЕ ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, сентябрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 13-мӗшӗнче СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халăх Комиссарӗ В. М. Молотов, Совет Союзӗн посольствинче Италин Лондонри посолне Карандини господина йышăннă.

ЮТ ÇӖРШЫВ ӖÇӖСЕН МИНИСТРӖСЕН ЯЧӖПЕ БЕВИН ПАТӖНЧЕ ПУЛСА ИРТНӖ ЙЫШĂНУ

ЛОНДОН, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 13-мӗшӗнче Англин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Эрнест Бевин лордсен палатинче ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗсен канашлăвне килнӗ делегатсен ячӗпе йышăну туса иртернӗ.

Йышăнура В. М. Молотов совет делегацийӗпе пӗрле, ытти государствăсен делегацийӗсен членӗсем, Арчибальд Кларк Керр, Англи министрӗсем тата пилӗк державăн хаçат-журнал представителӗсем пулнă.

Францири суйлавсем умӗн

ПАРИЖ, сентябрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пӗлтерет: Ӗç конфедерацийӗн, радикал-социалистсен, социалистсен тата коммунистсен партийӗсен, çавăн пекех тата этем прависен лигин представителӗсем де Голле çыру янăччӗ; унта вӗсем суйлавсем пирки правительство сӗннӗ йӗркене улăштарма тата представительсене тӗрлӗ вырăнти халăхсен хисепӗ тăрăх суйламалла тума сӗннӗччӗ. Де Голль хальчав çыру çине ответ панă. Социалистсен партийӗн генеральнăй секретарьне Даниэль Мэйера панă ответӗнче де Голль хăй сӗннӗ йӗркенех пурнăçа кӗртмелли çинчен каланă. Çав йӗрке ытти йӗркесенчен пуринчен те лайăхрах, тенӗ. Де Голль промышленноçлă пысăк центрсенчен представительсем суйласа ярас тӗлӗшпе хăй сӗннӗ йӗркене кăшт улăштарма килӗшнӗ.

ПАРИЖ, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗç конфедерацийӗн, коммунистсен, социалистсен тата радикал-социалистсен партийӗсен, çавăн пекех тата этем прависен лигин представителӗсем ӗнер де Голль панă ответа сӳтсе-явма пухăннă.

Икӗ сехет хушши канашланă хыççăн çав организацисен представителӗсем çакăн пек резолюци йышăннă:

«Ӗç конфедерацийӗн, этем прависен лигин, социалистсен, радикал-социалистсен тата коммунистсен партийӗсен делегачӗсем Ӗç конфедерацийӗн çуртӗнче, Британири тред-юнионсен конгресне кайнă Жуо вырăнне Фрашон председатель пулса ертсе пынă канашлура, вăхăтлăх правительствăн председателӗ панă ответа сӳтсе-яврӗç. Вӗсем çакăн пирки тăрăхаççӗ: çав ответа форми енчен те, ăшчикки енчен те кӳрентермелле çырнă; форми енчен илсен—вăл вăхăтлăх правительствăн председателӗ çав ответа Ӗç конфедерацийӗн представительне яма килӗшменнипе кӳрентерет; ăшчикки енчен илсен—вăхăтлăх правительствăн председателӗ хăйне çыру çырса янă партисемпе организацисен представителӗсем тӗрлӗ вырăнти халăхсен хисепӗ тăрăх суйлама сӗннине сирсе янипе кӳрентерет. Правительство председателӗ ӗçе тӗрӗс татса парас вырăнне пире çӗнӗрен темиçе вырăн сӗнни, çапла туса принцип тӗлӗшпе пыракан тавлашу вырăнне турккн тума сӗнни делегатсене кӳрентерет. Çыру янă представительсем, суйлавран усă курассишӗн мар, суйлава тӗрӗс те тӳрӗ кăмăлпа туса иртерессишӗн кӗрешекенскерсем, çак ыйтăва сӳтсе-явмашкăн француз халăхне пама йышăнчӗç. Çак представительсен тепӗр пухăвӗ сентябрӗн 18-мӗшӗнче пулса иртет».

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ ДОМЕЙ ЦУСИН АГЕНТСТВИН ПӖТӖМ ӖÇНЕ ПӖТЕРСЕ ЛАРТМА ХУШНĂ

ЛОНДОН, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токио хулинчи корреспонденчӗ çапла пӗлтерет: Макартур генерал Домей Цусин агентствин ӗçне пӗтӗмпех чарса лартма приказ панă.

США КОНГРЕСӖ ӖÇСӖРЛӖХ ПОСОБИЙӖСЕМ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тăрăх, сенатăн финанс тӗлӗшпе ӗçлекен комиссийӗн председателӗ Джордж хаçатсен представителӗсене çапла каланă: ӗçсӗрлӗх пособине ӳстерме сӗннине комисси йышăнмарӗ, тенӗ. Комисси правительство служащийӗсене тата суту-илӳ флочӗн морякӗсене, ӗçсӗр тăрса юлас пулсан, пособи парса тăмашкăн, страховани тумалли çынсен шутне кӗртме тата пособисем парса тăмалли срока 26 эрне таранччен тăсма килӗшнӗ. Çапла ӗнтӗ, ӗçсӗр юлнă çынсене пособи парас тӗлӗшпе Трумэн сӗннисен пӗр пайне çеç йышăннă.

Тӳрлетни

«Чăваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн «Республикăри колхозсенче çӗрулмипе пахчаçимӗçсене пухса кӗртесси çинчен» йышăннă постановленийӗн «е» пунктне («Чăваш Коммуни» хаçатăн сентябрӗн 14-мӗшӗнчи померне пăхăр) çапла вуламалла: «Колхозсен правленийӗсене кулленхи нормăна тултарса пыракан колхозниксене пӗр кун хушшинче кăларнă çӗрулмин 10 процентне пама сӗнес».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. [illegible], 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителӗн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнăç пайӗн—3-93, промышленность пайӗн — 3-97, ялхуçалăх пайӗн—3-93, рабсельхорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00259 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 50 42 п. л. Тираж 16.000 экз.